*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

20 (2432) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

ЮН КУН

2014,
пуш, 19

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

## Аптрамансен йăхĕнчен

«Алăксăр, кантăксăр витесене курсан шикленсе каялла чакас шухăш пулмарĕ-и?» – кăсăкланса ыйтрăм «Энтепе» тулли мар яваплă обществăн ертӳçинчен Андрей Васильевран. «Эпĕ ял ачи-çке. Ку тăрăхрах çуралса ӳснĕ. Пĕчĕкренех ĕçпе пиçĕхнĕ. Çавăнпа та шикленес туйăм пĕрре те пулмарĕ», – терĕ вăл иккĕленмесĕр.


*Андрей Васильев ферма ĕçченĕсемпе пĕрле*

Ленин орденлĕ «Победа» колхоз хăй вăхăтĕнче таврара кĕрлесе çеç тăнă. Вунă ял кĕнĕ унта. Каярахпа хуçалăх саланма пуçланă. Энтепе ялĕнчи машинăпа трактор паркĕ техникăсăр, ферма витисем выльăхсăр кăна мар, алăксăр, тăрăсăр юлнă. Уй-хирте вара çум курăк ешернĕ. Аслă Пăла Тимеш ял çамрăкĕ Андрей Васильев хуçалăха çĕнĕрен йĕркелеме шут тытнă. «Тыр-пул çитĕнтернипе çеç тупăш илейместĕн. Çавăнпа та мăйракаллă шултра выльăх тытма шутларăм», – кăмăллăн калаçать Андрей Петрович.

Малтан пĕр витене юсаса çĕнетнĕ, каярахпа – теприне. Ăна Çĕнĕ çул умĕн çеç хута янă. 200 ĕне вырнаçать унта. Халĕ хуçалăхра сăвăнаканнисем – 150 пуç. 2015 çул тĕлне вĕсен хисепĕ 200-тен кая мар пулмалла. Паянхи кун «Энтепере» ĕне выльăх шучĕ – 313 пуç.

Хăтлă çурт фельдшерпа акушер пунктне аса илтерет. Витене тултан та, шалтан та тĕнче шайĕнчи стандартсене тĕпе хурса çĕнетнĕ. Реконструкци хакĕ те самаях – 25 млн тенкĕ. Паллах, çăмăллăх кредичĕпе усă курнă хуçалăх. Унсăр пуçне хăйĕн укçи-тенкине те хушнă. Витене ултă уйăхра хута яма пултарнă.

Ĕçченсем валли душ, хывăнса-тăхăнмалли пӳлĕмсем, туалет пур. Кунтах – кĕпе-йĕм çумалли машина. Ĕç тумтирĕсене вараласан чӳхесе çакаççĕ. Ĕçлекенсем тенĕрен çакна палăртмалла: маларах 14 çын вăй хунă хуçалăхра. Витене çĕнетнĕ хыççăн тепĕр 3 ĕç вырăнĕ хушăннă: механизатор, пăру пăхакан тата ĕне сăвакан. Вĕсем пурте Энтепе тата Кивĕ Арланкасси ялĕсенче пурăнаççĕ.

150 ĕнене Галина Клементьевăпа Лариса Батанова дояркăсем кунне виçĕ хутчен сăваççĕ. «Ĕнесем пăрулană май сăвăм ӳссех пырать, – тет Лариса Батанова. – Халĕ эпир фляга çĕклеместпĕр, сĕт пăрăх тăрăх каять».

Ялта ĕç пурришĕн савăнать хĕрарăм. «Килте ларнипе ĕç тухмасть, выльăхчĕрлĕхе тăрантармалла. Хуçалăхра ĕçленĕшĕн утă-улăм, тырă илетпĕр. Шалу та вăхăтрах параççĕ». Хушма хуçалăхра та мăйракаллă шултра выльăх шучĕ самай вĕсен – 3 пуç.

Асăннă хуçалăх сĕте чи пысăк сортпа ăсатать. Патăрьелĕнчи «Весна» агросоюз ăна 21,46 тенкĕпе туянать.

Хура-шурă ăратлă ĕнесене хăй вăхăтĕнче Елчĕк районĕнчи «Прогресс» тата Комсомольски районĕнчи «Восток» хуçалăхсенчен илсе килнине пĕлтерчĕ ертӳçĕ. Пĕлтĕр пĕр ĕне пуçне 4198 литр сĕт суса илнĕ. «Пĕрре пăруланăскерсем çеçха вĕсем. Малашне тата ытларах сĕт парĕç», – терĕ вăл.

Çур аки çывхарнă май канăç та çухалать. Акмалли вăрлăхсем, çунтармаллисĕрмелли материалсем хатĕр, удобрени çителĕклĕ. Уй-хире те кĕркуннех сухаласа хăварнă. Выльăх апачĕ те ешĕл курăк çине тухиччен çитет. Çитет кăна мар, юлать те. Кашни çулах ăна ытларах хатĕрлеме тăрăшаççĕ. Çанталăка пĕлейместĕн, кăçал тепле пулĕ. Юлашки çулсенче хресчене вăл та ура хума хăтланать-çке. Çавăнпа саппаспа пурăнма хăнăхнă Энтепесем.

Чи тăрăшуллă ĕçченсене иртнĕ çул Андрей Петрович велосипед парнеленĕ. Кăçал та хастарсене савăнăç кӳме тăрăшать вăл: Чăваш Енри санатори-курорта кайма тӳлевсĕр путевкăпа тивĕçтерессе шантарчĕ. Ертӳçĕ ĕçчен сывлăхĕшĕн тăрăшни çав тери паха тĕслĕх.

**Валентина ПЕТРОВА. Елчĕк районĕ.**

## Раççейпе пĕрле

Иртнĕ шăмат кун Шупашкарти Хĕрлĕ тӳремре Крымра пурăнакансен йышăнăвне – Автономи Республикин шăпине палăртасси пирки референдум ирттерессине – ырлас тĕлĕшпе митинг иртнĕ. Унта пĕтĕмпе 10 пине яхăн çын хутшăннă.

Ку акцие йĕркелекенсем – çамрăксен, хĕрарăмсен, ветерансен общество организацийĕсем, профсоюзсем. Политика партийĕсем те çак кун пĕрешкел шухăша палăртнă. «Чун ыратăвĕ пĕтĕм политика партине пĕрлештерет», – тенĕ Чăваш Ен пуçлăхĕ Михаил Игнатьев журналистсене. Вăл митинга регион ертӳçи пек мар, чи малтан Раççей гражданинĕ пек – чун-чĕре ыйтнипе – килнине пĕлтернĕ.

Акцие Севастопольти чăваш наци культура обществин председателĕн çумĕ Владимир Мочалов та хутшăннă. Йывăр вăхăтра пулăшнăшăн вăл ентешсене чĕререн тав тунă.

Митинга килнисем резолюци йышăннă. Унта Раççей тата Украина халăхĕсен пин çуллăха пыракан пĕрлĕхне нимĕнле чикĕ те аркатайманнине, вĕсем пĕрле тĕрлĕ йывăрлăха чăтса ирттернине палăртнă.

Хальхи вăхăтра Крымра Чăваш Енре çуралнă 2,5 пин ытла çын пурăнать. Пирĕн республикăпа Украинăна тахçанах йĕркеленнĕ экономика тата культура хутшăнăвĕсем çыхăнтараççĕ. 1941 çулта Харьковри электроаппаратура заводне Шупашкара эвакуациленĕ. Çеçпĕл Мишши поэт юлашки çулĕсене Украинăра ирттернĕ, ăна унтах пытарнă.

Крымра референдум хыççăн протоколсене 100 процентпа пăхса тухнă. Суйлавçăсен 82,7 проценчĕ сасăлава хутшăннă. Суйлав участокне пынисен 96,7 проценчĕ Раççейпе пĕрлешесшĕн пулнине палăртнă.

Ĕнер Шупашкарта Крымпа Севастополь халăхĕн референдумри йышăнăвне ырласа тепĕр митинг иртнĕ.



Сăн ӳкерчĕкĕ www.cap.ru сайтран илнĕ

## Йăранар, пар пире пархатар

### Петров, Михайлов тата ыттисем...

Элĕк районĕнчи Йăранарта çуралса ӳснĕ Александр Петров Чăваш ял хуçалăх академийĕнчен вĕренсе тухсан тăван тăрăха таврăннă, фермер хуçалăхĕ йĕркеленĕ. Кивĕ ферма çуртне арендăна илсе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме тытăннă çамрăк. Районта мăйракаллă шултра выльăхпа ĕçлекен тепĕр хастар чăваш пур – Ехремкассинчи Олег Михайлов. Иккĕшĕ те "Фермер ĕçне пуçăнакан" программăна хутшăнса 1100 пин тенкĕлĕх грант çĕнсе илме пултарнинчен тĕлĕнмелли çук. Тантăшĕсенчен çивĕч ăс-тăнпа тата ӳркенменлĕхпе палăрнăскерсем бизнес-плана тĕплĕ хатĕрленĕ, çивĕч тупăшура ыттисене кая хăварнă. Вĕсен пĕтĕм ĕмĕт-шухăшĕ ялпа, унăн пуласлăхĕпе çыхăннă.

– Хамăр мĕн пултарнине ĕçре кăтартас терĕмĕр, – каласа парать Александр Владимирович. – Пуçламăш утăм нихăçан та çăмăл мар. Пирвайхи çулсенче витере вăтăр пăруччĕ, йыш хушăнса пычĕ. Нумаях пулмасть тепĕр 43 пуç илсе килтĕмĕр. Пĕрре тытăнсан каять вара, иккĕленӳ сирĕлет. Апат-çимĕçне вырăнта туса илетпĕр. Ӳсен-тăран енĕпе профессора тухман, çапах ăна-кăна тĕшмĕртетĕн. 42 гектар çинче нумай çул ӳсекен курăк акатпăр, тĕш тырă лаптăкĕ 100 гектар. Çĕр сухаласа тырă вырса илме техника хатĕрĕ пур, аптрамастпăр. Паллах, грант укçипе çеç хуçалăха аталантараймăн, банк кредичĕсемсĕр май килмест. Аш-какай лайăх сутăннă чухне кивçенпе татăлатăн.

Академире ăс пухнă çулсене ырăпа аса илет вăл. Практикăна "Прогресс" хуçалăхра ирттернĕ, арканнă хыççăн унăн ячĕ кăна юлнă темелле. Халь практикăна килен-каян ялта вăрах тытăнса тăмасть. Диплом илнисем хулара юлас шухăшпа пурăнаççĕ. Акă мĕн канăç памасть Петрова. Ферма ĕçне-хĕлне чиперех ăнтарса пынине кура ăна тепĕр яваплă ĕç шанса панă: районти информаципе консультаци центрне ертсе пымалла. Ĕçĕ нумай енлĕ. Хресчене ку чухнехи технологисене алла илме пулăшакан тытăм. Çынсене ял хуçалăхĕнчи çĕнĕлĕхсемпе анлăрах паллаштарас тĕллевпе семинарсем йĕркелеççĕ, хуçалăхсене тухса паха опытпа паллаштарасси йăлана кĕнĕ. Ялта харпăр хăй тĕллĕн ĕç пуçараканăн агротехникăна чухланисĕр пуçне выльăхчĕрлĕх самăртассипе çыхăннă вăрттăнлăхсене те пĕлмелле-çке.

Кам вăл паянхи фермер? Кирлĕ чухне трактор е комбайн рулĕ умне ларать. Пур енлĕ аталаннă специалист. Çĕр ĕçĕнче пуян опыт пухнă Волков, Журавлев, Никифоров, Иванов, Харитонов, Узянов фермерсене шăпах çавсен шутне кĕртмелле. Сăмах май, кунта туса илекен çĕр улмин 70-75 процентне коллективлă фермер хуçалăхĕсенче ӳстереççĕ! Çакнашкал тĕслĕх нихăш районта та çук.

Ăсталăх вăхăтпа килет. Аслисен пуçарулăхĕпе ĕçченлĕхĕ çамрăксене куçмалла пек, анчах ăçта вăл, йывăрлăхран шикленмен, çукран пур тăвакан яшкĕрĕм? Эпĕ ас тăвасса, ĕлĕкрех хуçалăхсем хăйсем валли кадрсем тăрăшса хатĕрлетчĕç, стипенди тӳлесе тăратчĕç. Элĕке ĕçлеме килес шухăшлисем пур-и паян? Агронома тата зоотехника вĕренекен икĕ çамрăкпа калаçса татăлнă-мĕн, килĕшӳ тунă. Пĕртте çырлахтармарĕ ку хыпар, мĕншĕн тесен чылайăшĕ паянхи кунпа пурăнма хăнăхнă, малашлăх пирки пуçа ватмасть. Ялта тĕпленекен агроном е инженер валли тĕрлĕ çăмăллăх палăртас ыйтăва темиçе çул сӳтсе яваççĕ, вĕçне-хĕрне тухаймаççĕ. Тепĕр тесен, ял шăпи хресченсĕр пуçне никамах та кулянтармасть пулас.

Александр Петров пеккисене ытларах курасчĕ ялта. Хăй çемьеллĕ. Мăшăрĕпе (вăл суту-илӳ тытăмĕнче ĕçлет) икĕ ача пăхса ӳстереççĕ. Пĕр-пĕрне юратса-ĕненсе пурăнсан ĕçре те хăвна лайăхрах туятăн ĕнтĕ.

2-мĕш стр. ➔

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 19.03 | 20.03 |
|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2–4 сехетре | –7 | –8 |
| | 14–16 сехетре | –1 | 0 |
| Юр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 733 | 737 |

«Ял тухтăрĕ» программа

# Алăра – миллион тенкĕ

## Çамрăк сиплевçĕсене кĕтсе илме хатĕр-и эпир?


Татьяна Игнатьева

**Татьяна Дмитриевна ИГНАТЬЕВА**, Шăмăршă районĕнчи Пăчăрлă Пашьел ялĕнче çуралса ӳснĕскер, сиплев тытăмĕнче 24 çул ырми-канми вăй хурать. Халĕ вăл – Тăвай район пульницин тĕп тухтăрĕн çумĕ. Ĕç биографине ача-пăча сиплевçинчен пуçланă. Чĕрĕк ĕмĕрте сывлăх хуралĕнче те пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Ĕлĕкрех çамрăк специалистсене пĕр-пĕр сыватмăша направленипе янă пулсан, халь суйлама ирĕк пур. Виçĕм çул ялта ĕçлеме кăмăл тунисене хавхалантарма ятарлă программа йышăнчĕç, кашнине пĕрер миллион тенкĕ параççĕ. Эппин сиплеври кадр "выçлăхне" татса пама пулмасть-и? Çамрăк специалистсем хăйсене мĕнле туяççĕ? Çакăн хуравне чи малтанах вĕсене ĕçе илекенсенчен ыйтса пĕлес терĕмĕр.

– Халăха сыватасси унччен те çăмăл пулман, паян та йывăрлăхсем пур, – тет Татьяна Дмитриевна. – Тăвайне качча тухсан 13 çул ача-пăча тухтăрĕнче ĕçлерĕм, каярахпа наркологи уйрăмне куçарчĕç. Унта та ĕç кăткăс, хăйне евĕр. Тĕп тухтăр çумне çирĕплетни виççĕмĕш çул. Ӳркенмесен пур ĕçе те хăнăхатăн. Районти сывлăх хуралĕнче пурĕ 40 тухтăр, вăтам сыпăкра 136 çын тăрăшать. Хăйсен тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ вĕсем. Хальлĕхе пĕр ял тăрăхĕнче пĕтĕмĕшле практика тухтăрĕн вырăнĕ пушă, травматолог пирки калаçса татăлнă. Тĕпрен илсен çынсем çитеççĕ.

"Ял тухтăрĕ" программăпа çичĕ çамрăк килни – ырă пулăм. Ĕçе пуçăнчĕç вĕсем. Тăваттăшĕ Тăвай районĕнче çуралса ӳснĕ: Венера Чумышева, Вера Ильина, Вера Сядакова тата Надежда Сергеева. Куратăр ĕнтĕ, шкулсенчи пекех сиплевре те хĕрсем ытларах. Пирĕн пархатарлă ĕç-хĕле çĕнĕ варкăш вĕрсе кĕртрĕç, вĕсене яваплă должноçсем шанса паратпăр. Акă Венера Чумышевăна поликлиника заведующине лартрăмăр. Пурте маттур.

Районти 15 фельдшер-акушер пункчĕн ĕçне-хĕлне тивĕçлĕ шайра йĕркеленĕ. Иртнĕ çул Вырăс Нăрвашра çĕнĕ пункт уçăлчĕ. Çитес çулсенче тата тăватă ялта хута яма палăртнă вĕсене. Надежда Николаевна Филиппова, Ираида Николаевна Андреева, Алена Ивановна Григорьева тухтăрсене халăх питĕ хисеплет. Çапах кадрсем ватăлни хытах шухăшлаттарать пире. Самана хиствевне кура çамрăксене яла укçапа илĕртни аван, вĕсем яланлăхах килсе тĕпленсен тем пекехчĕ.

Сиплевре пирвайхи утăмсем тăвакансене хăйсене итлесе пăхар-ха.

**Вера ИЛЬИНА, терапевт:**

– Эпĕ Тăвайра çуралса ӳснĕ те маншăн кунта пурте çывăх: çыннисене паллатăп, тăван-пĕлĕш район центрĕнче пурăнать. Тухтăрсене те ачаранпах пĕлнĕ, мĕншĕн тесен анне сыватмăшра хирурги уйрăмĕн сестринче ĕçленĕ-çке. Шкул пĕтернĕ тĕле урăх професси çинчен ĕмĕтленмен те.


Вера Ильина

И. Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина факультечĕн ятсумĕ пысăк. Профессорсемпе преподавательсем пирĕнтен çирĕп ыйтнă, ăста специалист пулас тесен нумай вĕренмелле, ятарлă литература алран кайман.

Тепĕр чухне çапла калаçкалаççĕ: "Хальхи студентсем путлĕ вĕренмеççĕ, вăхăта ташă каçĕсенче ирттереççĕ. Чăнчăн сиплевçĕ пулса тухасси иккĕлентерет. Хамăр сывлăха çавсене шанса паратпăр-и?" Килĕшес килмест кунпа. Пур япалана та тӳрех ăнкараймăн, ăсталăх вăхăтпа килет-тĕр.

Профилактика пайĕн терапевчĕ пулнă май эпĕ халăх умĕнче час-часах лекци вулатăп. Диспансеризаци вăхăтĕнче ĕç хушăнать. Пĕлетĕр ĕнтĕ, ял халăхĕн пĕр пайĕ пульницана кайса тĕрĕслеттерессинчен пăрăнма тăрăшать. Çынсемпе тĕл пулатăн, ăнлантарса паратăн. Чир-чĕр шала кайиччен тухтăрпа канашланин пĕлтерĕшне хăшĕ-пĕри ăнланмасть-ха. Нуша килсе çапсан вара япăх сиплерĕç тесе ӳпкелешеççĕ.

Çĕнĕ ĕçре майĕпен хăнăхатпăр. Пирĕн çемьере ывăл ӳсет, Максим иккĕре. "Ял тухтăрĕ" программăпа килĕшӳллĕн паракан укçа хваттер туяннă чухне питĕ кирлĕ пулчĕ. Пилĕк çулта ĕçлесе татмалла ăна. Хамăрăн уйрăм кĕтес пурри – телей. Манпа пĕрле вĕреннисенчен пĕри кăна Патăрьелне кайма килĕшрĕ. Ялта ӳснисем те тăван кĕтесне таврăнасшăнах мар. Эпĕ пĕртте кулянмастăп. Коллектив туслă, хапăл туса кĕтсе илчĕç пире.

**Владимир ГУРЬЕВ, хирург:**

– Ман аттепе анне – сиплев ĕçĕн ветеранĕсем. Пурнăçра темĕнле кăткăс лару-тăрăва та лекнĕ, çапах чирлисенчен япăх сăмах илтмен вĕсем. Тен, чăнах та хальхи ăру кулленхи пулăмсем çине çăмăлттайла пăхать пуль. Анчах Гиппократ сăмахĕпе тупа тунисем хăйсен яваплăхне аван туяççĕ. "Сапер пĕрре çеç йăнăшать" тени пирĕн професси çыннисем пирки каланăн янăрать. Хирург – сиплеври чи кăткăс специальноç. Шурă халат уртса яни эпир пур енĕпе те хатĕрленсе çитнине пĕлтермест, пурнăç тăршшĕпе вĕренмелле, квалификацие ӳстермелле.

Çулталăк каялла Тăвайне килсен маншăн ку тăрăх кăштах ютчĕ, ачалăх çулĕсем Çĕрпӳре иртнĕ вĕт-ха. Кунта вăхăтлăха çын патне вырнаçрăм, уйăхне 2,5 пин тенкĕ тӳлетĕп. Çутăшăн тата Интернетшăн тӳлекен укçа ку шута кĕмест. Паллах, пирвайхи çулсенче çамрăксене пысăк шалупа иртĕхтермеççĕ. Апла пулин те аптрамастпăр, тăхăнма-тумланма çитсе пырать. Патшалăх укçипе мĕн туянасси çинчен шухăшламан-ха, пурăнсан курăнĕ.


Владимир Гурьев

Ăш пиллĕн йышăнни кăмăла кайрĕ. 2012 çулта диплом тыттарнă хыççăн пĕр çуллăх ординатурăна Шупашкарти трактор тăвакансен пульница комплексĕнче ирттертĕм. Унтан Тăвайри сыватмăшра ĕçлеме тытăнтăм. Хальлĕхе хам тĕллĕн операци туман, аслисенчен вĕренетпĕр. Камран тĕслĕх илмелли пур. Калăпăр, хирурги уйрăмне Николай Александрович Димитриев ертсе пырать. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх – вăтăр çул ытла сыватать çынсене. Пурнăçпа вилĕм чиккинче тăнисем çĕре çити пуç тайса тав тăваççĕ. Таврари чи пултаруллă тухтăр питĕ хумхануллă самантсенче те хăйне çирĕп тытни тĕлĕнтерчĕ. Ӳстермесĕр калатăп: ун патĕнче пурнăç шкулĕ витĕр тухатăн. Епле пăрахса кайăн-ха çак йыша?

Сывату тытăмĕнче çĕнĕ проектсене çул панине ырласшăн. "Ял тухтăрĕ" программăна маларах ĕçе кĕртмелле пулнă. Ан тив, яла хуларипе танлаштараймăн, çапах кунта хăйсен ĕçне чунтан парăннисем пурри паха. Самантпа усă курса пĕр çитменлĕхе асăнасшăн. Яла куçакансене хваттерпе тивĕçтерессипе никамах та ĕçлемест. Ял тăрăхĕсен ертӳçисем хăйсен хысни ахаль те чухăнни çинчен калаççĕ. Çак ыйту пире кăна мар, ытти специалистсене те хумхантарать.

**Григорий СЛАВИН.**

# Йăранар, пар пире пархатар

← 1-мĕш стр.

### Ăсталăх вăхăтпа килет

"Новый путь" ял хуçалăх кооперативĕн ертӳçи Иван Игнатьев сăмах ваклама юратакан çын мар. Хуçалăха чылай çул ертсе пырса малти рете кăларнă. Сĕт сăвассипе Чăваш Сурăмсене çитекенни çук: республикăра та, районта та. Иртнĕ çул кунта Чăваш Енри ферма ĕçченĕсен ăмăртăвне ирттернĕччĕ.

– Мĕн мухтанмалли, ĕçлетпĕр, пурте тăрăшуллă. Ытла ырласа ан çырăр тархасшăн, – ӳкĕтлет Иван Николаевич.

Чĕнмен хăнасемпе хуçа темшĕн кăмăлсăртарах пулнине кăшт каярах ăнланса илтĕм. Района журналистсем килсен вĕсене тӳрех Иван Игнатьев патне ăсатаççĕ пулас, сăмах ăстисем чăн пурнăça сăнлас вырăнне ăна хитрелетсе кăтартни килĕшсех каймасть.

"Новый путь" ĕçĕ-хĕлĕ ӳсĕмлĕ. 2013 çулта 200 пуç вырнаçмалли пăру вити, 400 тонна тырă управĕ хута янă. Çĕрçĕр пин тонна сенаж хумалли объекта вĕçне çитерни те хуçалăхшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

– Хуçалăх тилхепине шанчăклă, мал курăмлă çын тытса пырсан çур аки йĕркеллĕ иртесси пирки иккĕленӳ çук, – тет район администрацийĕн пуçлăхĕ Александр Куликов. – Пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсен лаптăкне чакармастпăр, удобрени тата çунтармалли-сĕрмелли материал кӳрсе килесси унччен тунă килĕшӳсем тăрăх пулса пырать. "Иккĕмĕш çăкăра" çуллен 900 гектар çинче пухса кĕртетпĕр.

Районĕпе пурĕ 8300 гектар çинче тыр-пул акмалла. Кĕрхи культурăсем 2300 гектар йышăнаççĕ. 960 тонна тырă вăрлăхне кондицие çитернĕ, ку палăртнин 60 процентĕ çеç-ха. Вăрлăх алласа хатĕрлессипе "Авангард", "Алмаз", "Правда", Ульянов ячĕллĕ хуçалăхсем ăнăçлăрах ĕçлеççĕ. Элĕксем 147 тонна элита сорт туяннă, тепĕр 25 тонна паян-ыран килмелле. 950 тонна минераллă удобренирен çуррине кӳнине палăртрĕç. Пысăк предприятисем кăна мар, фермер хуçалăхĕсем те мĕн кирлине ытлă-çитлĕ хатĕрлесшĕн. Кăçалхи çу шăрăх та типĕ килессе систерекенсене ĕненес пулсан лаптăксене шăвармалли хатĕр-хĕтĕр пирки те халех шухăшламалла.


*Информаципе консультаци центрĕн ертӳçи Александр Петров*

2014 çул пуçланнă тĕле районти мĕн пур хуçалăхсенче 10498 пуç мăйракаллă шултра выльăх, 5270 ĕне шутланнă. Ĕне усракансем продукцие ăçта вырнаçтарнипе кăсăклантăмăр. Сĕт пуçтаракан вунă организаци-мĕн: Пăрачкав, Çĕмĕрле, Вăрнар тата Шупашкар пайтаçисем иленнĕ Элĕке. Вырăнтисем тĕлĕреççĕ тесе каламăпăр. Сĕтĕн пысăк пайне Элĕк райповĕ туянать. Халăхран 20 тенкĕпе сутăн илеççĕ.

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.**

Реклама

## Çĕнĕ офис

Шупашкарти "Ровесник" суту-илӳ çуртĕнче "Россельхозбанкăн" Чăваш Енри регион филиалĕ пĕрремĕш офис уçрĕ. Мини-офис 9-мĕш пилĕкçуллăх проспекчĕпе Хусанкай урамĕ хĕресленнĕ çĕрте вырнаçнă. Унта çитме питĕ меллĕ.

Офис специалисчĕсем килен-каяна кредит илме заявка çырма пулăшĕç, банк карточки тутарма кирлĕ хутсем хатĕрлесе парĕç. Кунта касса вырнаçнă, банкомат тĕрлĕ тӳлев операцийĕсем пурнăçлать. Офисра укçа управĕн счечĕ уçма май пур, валютăпа тата хаклă йышши изделисемпе çыхăннă операцисене хăвăрт туса ирттереççĕ. Тĕп хуламăрти Кăнтăр енчи çĕнĕ районта пурăнакансем кредит тӳлевĕсемпе инçе çӳремĕç. Штатра çын нумаях мар пулин те финанс тĕлĕшĕнчи пулăшу ĕçĕсене палăрмаллах анлăлатнă.

– Банкăн суту-илӳ вырăнĕсем республикăри пур районта ĕçлеççĕ,– тет регион филиалĕн директорĕ Ирина Письменская. – Кунсăр пуçне Шупашкарта виçĕ офис, Çĕнĕ Шупашкарта пĕр вырăн уçăлнă. Банк операцийĕсен нумай енлĕ пулăшăвĕпе усă куракан пин-пин çын çĕнĕ офис хута кайнипе кăмăллă, чи кирли – вăхăт перекетленет.

# Çырли пиçĕ. Кам валли?

### Ячĕ пур та палли çук

Çапла вăл çул пĕлмесен: пĕр çĕре çитес тетĕн те пач урăх вырăна сиксе тухатăн. Сĕнтĕрвăрри районĕнче Вăрни ялне çитес вырăнне Лапри Упакассине лекрĕмĕр. Çакна ял çыннипе калаçса кайсан тин чухларăмăр. Ял ятне палăртакан паллă çук та ăçтан пĕлĕн? Сăрт айлăмĕнче, Çавал шывĕ хĕрринчех вырнаçнăскер такамран пытаннă тейĕн. Ял ятне палăртакан юпана лартма килнĕ çын та, тен, ăна шыраса тупайман.

Пĕр-ик çын пурăнакан Вăрни вырăнне Лапри Упакассине лекнĕшĕн пĕртте кулянмарăмăр. Кунта çирĕм икĕ çуртран вун иккĕшĕнче çынсем пурăнаççĕ, тĕрĕсрех, хĕл каçаççĕ.

Пуплеме çын шыраса темиçе çурт хапхине шакканă хыççăн урампа иртсе пыракан пĕр арçын ял пусĕнчи пĕрремĕш кил патне тĕллесе ячĕ. "Унта хĕлĕн-çăвĕн пурăнаççĕ", – терĕ. Арçынĕпе хăйĕнпе калаçас – килĕшессе шанмарăм. Куç айĕсем хĕрлĕнкĕваккăн шыçăнса тăнăран-ши, пирĕнтен васкасах уйрăлчĕ те малалла таплаттарчĕ.

Пĕр ватăна йывăр чир хыççăн яла ачисем илсе килнĕ. Вырăн çинчен тăраймастьмĕн. Килсе янă пулсан та чун панă тĕпренчĕкĕсем пăрахмаççĕ, килсех тăраççĕ. Теприн, хĕрĕх пиллĕкри вăй питти, ĕçлеме ӳркенмест, анчах юлташĕпе ĕçке кайма кăмăллать. Виççĕмĕшĕ çирĕм пуç ытла ĕне выльăх усрать. Тăваттăмĕшĕн, Елена Загирова пеккин, ирĕксĕрех вăхăтлăха ялта пурăнма тивет.

Елена Владимировна упăшкин хушамачĕпе Загирова иккен. Хĕр чухне Комиссарова пулнă. Хăй каланă тăрăх – аслашшĕ вăрçăччен республикăри пĕр хаçатра ĕçленĕ, Киремет Петти ятпа пичетленнĕ. Шел, фронтран таврăнайман. Тепĕр 2-3 çултан пенсие тухсан Лапри Упакассинче çуралса ӳснĕ хĕрарăм архивсене çитсе хăйĕн йăх-несĕлне тăрăннăн тĕпчесшĕн.

### Нуша хӳре вĕçне килсен

Ашшĕпе амăшĕ чăваш тăрăхне таврăнма тархасламан пулсан Загировсем хальччен Ĕпхӳ хулинче хăтлă хваттерте киленсе пурăнмалла та... Куçса килнĕшĕн ӳкĕннине пытармасть хĕрарăм. Сĕнтĕрвăрринче нуша-инкек хӳре вĕçне ларнă та хăпма пĕлмен. Йывăç çуртри хваттер çунса кĕлленсен виçĕ ачаллă çемьен (çунса каясран иккĕмĕш хутран сикнĕ) ăçта кăна пурăнма тивмен. Паян – пĕр вырăнта, ыран – тепĕр çĕрте. Çулталăк ытла шкулта выртса тăнă, кил хуçи хĕрарăмĕ унти хуçалăха тытса пынă. Шкул хупăнсан пĕр юхăнчăк çуртра аран хваттер панă вырăнти администраци. Çурчĕ пурăнма юрăхсăр. Патшалăх программипе кунти çемьесене хăтлă хваттерсене куçармалла. Загировсене те сĕннĕ, анчах пĕри те тивĕçтермен. Елена Владимировнăн упăшки – инвалид, пĕр урине пĕç тĕп таран татнă. 5-мĕш хутри хваттере хăпарса анма ăна мĕн тери асаплă пулни паллă ĕнтĕ. "Пирĕн икĕ пӳлĕмлĕ хваттерччĕ, пĕрреллине кăна сĕнчĕç", – каламаллине каласшăн хĕрарăм. Сусăр упăшки чĕрепе те аптăратьмĕн, тухтăрсем операци тутарттарасшăн.

Йĕркеллĕ хваттер пама Загировсене списока аран-аран кĕртнĕ. Çĕнĕ çуртра пулмалла вăл. Çуртне кăçал туса пĕтермелле. Анчах Елена Владимировна асăннă тăрăх – ăна хăпартма та тытăнман. Çавăнпа каллех иккĕленет вăл. Ку таранччен нуша хăвалани пе мĕнле кăна пуçлăх патне çитмен, çыру çырман?! Упăшкине инвалида кăларсан та. Малтан иккĕмĕш ушкăн инваличĕ пулнă вăл. Кайран виççĕмĕшне куçарнă. Кун пек чухне ĕçлеме ирĕк параççĕ, анчах урасăр инвалид Сĕнтĕрвăрринче ăçтан ĕç туптăр? Юрать халĕ иккĕмĕш ушкăна каялла таврăнă. "Пĕрремĕш ушкăн çинчен шухăшламалли те çук. Ăна вырăнпа выртакансене кăна параççĕ. Упăшка телевизор пăхать те ытти регионта хăй пек урасăррисем те пĕрремĕш ушкăна лекни çинчен калать", – тет Елена Загирова.

Хулара çĕнĕ хваттер кĕтсе нушаланса çитнĕ çемье иккĕмĕш çул кил хуçи хĕрарăмĕн тăван ялĕнче пурăнать.

### Хĕлле лăскать, çулла лăпкать

Шкул пĕтерсен Елена Владимировнăн юлташĕсем университета тухтăра вĕренме кайнă. Ăна та пĕрле чĕннĕ. "Часах йăмăк çуралмаллаччĕ те анне вырăнне ĕçе тухма тиврĕ. Вĕренме ĕлкĕрен терĕç", – аса илет вăл. Йăнăшнă çав килтисем. Ĕлкĕреймен вăл аслă шкула кĕме. Ирĕксĕрех заявление пир-авăр техникумне кайса пама тивнĕ. Вĕренсе тухсан ăна ĕçлеме Ĕпхӳ хулине янă. Унта тутар каччипе паллашнă. Ашшĕ-амăшĕн сăмахĕнчен иртеймесĕр çемйипе Чăваша таврăннă.

"Лайăх, лăпкă çĕрте пурăнатпăр", – тет Елена Владимировна Лапри Упакасси ялĕ çинчен сăмах хускатсан. Таврари çут çанталăк илемĕ урăхла калаттараймасть пулĕ çав. Кунта нихăçан та социаллă объектсем пулман, çавăнпа клуба, лавккана юнашар яла çӳренĕ, çӳреççĕ те. Пĕр сутуçă-усламçă пулăшать тата вĕсене. Мĕнле тавар кирлине ăна малтан пĕлтерсе хураççĕ. Пенси валеçнĕ кун вара çăнăх, песук, кĕрпе таврашне хайхи машинипех килсе парать. Кун пек чухне ватăсем çăкăра чылай вăхăт килте пĕçереççĕ. Загировсен ывăлĕ Шуршăлта уйрăм çын пекарьнинче ĕçленĕрен çăкăрне те унтанах илсе килет. Çăкăр пĕçерме те пултарать арçын, анчах çын çитменрен халĕ ăна грузчик ĕçне тутарттараççĕ.

Шупашкара е Çĕнĕ Шупашкара каймалла чухне Лапри Упакассисем вăрман витĕр тӳрĕ те кĕске çулпа Шуршăла тухаççĕ. Хĕлле çавра çула шанма çук. Асфальт ял патне çитмест, хуçалăхăн юхăннă хуралтисем таран кăна. Çула юртан хыраççĕ, анчах пур чухне те мар – юр самай тултарсан кăна. Куншăн та тав тăваççĕ çынсем.

Пĕлтĕрччен ĕçмелли шыв патне нумайăшĕ кулатасем патне утнă. Иртнĕ çул чылайăшĕ киле шыв кĕртнĕ. Халĕ çырмана çӳрекен сайра. Çуртсенче çут çанталăк газĕ çунать.

Ĕçлес текенни ĕçлет, ĕçес шухăшли те ĕç тупать. Сăртран çӳлерехри Уплер ялĕнче нумай выльăх усраççĕ. Пăхса ĕлкĕреймеççĕ, вăхăт çитмест. Çавăн пеккисене пулăшса укçа илеççĕ те "çуттипе" савăнаççĕ. Юрать унашкаллисем ялта йышлă мар. Анчах та выльăх усракан маттурсем Лапри Упакассинче те пур. Пĕрисен ĕни, вăкăрĕ, пăрушĕ иртнĕ çул пĕтĕмпе çирĕм пуçран иртнĕ.

Хĕлле ял çывăрать, çулла шавлать, кĕрлет, куç тулли илем парнелет. Пушă çуртпа хыт-хура пуснă пахча кураймастăн. Сăрт айлăмĕнчи ял çĕр çырли айне путать. Йĕри-тавра – хĕп-хĕрлĕ. Ĕлĕк сăртсем тăрăх выльăх-чĕрлĕх нумай çӳренĕ. Халĕ ун пек таптанмасть те çырлана выртсах пуçтаратăн. Инçех те мар сиплĕ çăл куçсем тапаççĕ.

Тепĕр çирĕм çултан та çак илем, ахăртнех, çухалмĕ. Анчах ялĕнче миçе çын юлĕши, çамрăксем килĕç-ши? "Пĕтсе пырать пулĕ", – тăван ялĕн малашлăхĕ пирки иккĕленет Елена Владимировна.

**Ирина НИКИТИНА.**

**ШУТА ИЛМЕ**

*Сад маçне (замазкăна) килте те тума пулать: кĕл (1 пай), сӳнтернĕ извеç (1), ĕне тислĕкĕ (2), кăшт çырма хăйăрĕ илсе супăньлĕ шывпа хутăштармалла. Хайхи хутăшпа йывăç суранĕсене сĕрмелле.*

## ÇЫРĂНТАРУ – 2014







*Пуш /март/ уйăхĕн 31-мĕшĕччен куллен тухакан «Хыпар» хаçата 2014 çулăн II çурри валли малтанхи хакпа –*

**460 тенкĕ те 86 пус –**

*çырăнса ĕлкĕрĕр.*

*Ака /апрель/ уйăхĕн 1-мĕшĕнчен хак ӳсет. Эрнесерен пичетленекен 16 страницăллă «Хыпар-шăмат куна»*

**218 тенкĕ те 22 пуспа**

*çырăнса илсен çемье бюджетне пушшех перекетлетĕр. Ака уйăхĕнчен ку кăларăм хакне те пысăклатаççĕ.*

ОАО «ЧУВАШВТОРМЕТ»
ЗАКУПАЕМ ЛОМ ЦВЕТНЫХ И ЧЕРНЫХ МЕТАЛЛОВ ДОРОГО.
Лицензия № ЧР 21/01/03 от 31.08.2001.
Реклама
г. Чебоксары, Гремячевский проезд, 5 а.
Тел.: (8352) 63-42-12, 63-51-84.

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

**Открытое акционерное общество «Чебоксарская керамика»,**
расположенное по адресу: г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 35 **извещает своих акционеров о том, что 29 апреля 2014 года в 11.00** в зале заседаний заводоуправления предприятия состоится **годовое общее собрание акционеров. Повестка дня:**

1. Утверждение годового отчета, годовой бухгалтерской отчетности, распределение прибыли общества. Заключение ревизионной комиссии общества по результатам годовой бухгалтерской отчетности. Аудиторское заключение.
2. О выплате дивидендов, размере, порядке и сроках выплаты.
3. Избрание членов Совета директоров.
4. Избрание членов ревизионной комиссии общества.
5. Утверждение аудита общества.
6. Об утверждении размера годового вознаграждения членам Совета директоров.

Начало регистрации акционеров с 10.00.

Дата составления списка акционеров, имеющих право на участие в годовом общем собрании акционеров – 28 марта 2014 года.

С материалами, подлежащими предоставлению акционерам по вопросам повестки собрания, можно ознакомиться в рабочие дни с 8.00 до 17.00 по адресу: г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 35, бухгалтерия общества.

**Справки по тел.: 52-73-27.**

**ПРОДАЮ**

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**33. Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит, торф.** Доставка. Т. 89053465671.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**154. Грабли** от 24 тыс. руб., **плуги, картофелесажалки, окучники, фрезы, косилки.** Низкие цены. **Все новое!** Доставка! Тел.: 89278516858, 89379559802.

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Пуш, 19 – юн кун | Пуш, 20 – кĕçнерни кун | Пуш, 21 – эрне кун | Пуш, 22 – шăмат кун | Пуш, 23 – вырсарни кун | Пуш, 24 – тунти кун | Пуш, 25 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 6.56 | 6.54 | 6.51 | 6.48 | 6.46 | 6.43 | 6.40 |
| | анать | 19.02 | 19.04 | 19.06 | 19.08 | 19.10 | 19.12 | 19.14 |
| Кун тăршшĕ | | 12.06 | 12.10 | 12.15 | 12.20 | 12.24 | 12.29 | 12.34 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун | 21-мĕш кун | 22-мĕш кун | 23-мĕш кун | 24-мĕш кун |
| | | Тараса паллинче | Скорпион паллинче | Скорпион паллинче | Ухăçă паллинче | Ухăçă паллинче | Ту качаки паллинче | Ту качаки паллинче |

ÇЕРЕМ ÇĔРСЕНЕ УÇНĂРАНПА 60 ÇУЛ ÇИТНĔ ТĔЛЕ

# Инçене çывăхран курас килнĕ

### "Виç сăмах та пулин çыр"

Шупашкар хулинче пурăнакан Алексей Осипович Бойков паян тивĕçлĕ канура. 1957 çулхи çурла уйăхĕнче Чăваш педагогика институчĕн истори уйрăмĕн 4-мĕш курс студенчĕ йышпа Алтай тăрăхне çул тытнă. Çерем çĕрсем илĕртнĕ каччăна. Тăван çĕр-шыва инçетрен курас килнĕ, урăх халăх çыннисемпе паллашма ĕмĕтленнĕ. Укçашăн çунман, тӳлеме шантарнăран улталамасса ĕненнĕ. Çула тухмалла тесен чире те пăхман.

1957 çулта грипп эпидемийĕ алхаснă, çакна пула Алексейăн сывлăхĕ те хавшанă. Курсра комсорг пулнăран чирлĕ тесе ыттисенчен епле пăрăнса юлăн? Тухтăр патне çитнĕ вăл. Чирлĕрен сывă (хут çине çапла çырнă) пулса тăнă. Инçете кайма килтисенчен те ирĕк ыйтман. Амăшĕ ӳкĕтлесе те пăхнă. "Эпĕ комсомол ертӳçи. Манăн юлма юрамасть", – тенĕ йĕкĕт. "Апла хыпар пĕлтерме ан ман. Виç сăмах та пулин çыр", – ыйтнă амăшĕ. Шута илнĕ çакна студент, тăван Аслă Кăршкана (малтан Октябрьски районне кĕнĕ, халĕ Çĕрпӳ районĕнче) унран пĕр йĕрке çеç çырнă çырусем çитнĕ. Çеçен хиртен район центрне каякан çын тупăнсан ялан çыру парса яма тăрăшнă. Çынни васканăран вăрах кĕттерме май килмен, çавăнпа килтисене мĕн каламаллине çапла пĕлтернĕ: "Кĕске çырнăшăн каçарăр. Эпĕ ырă-сывах. Чипер юлăр".

Шупашкар çамрăкĕсен шавлă ушкăнĕ çитнĕ çул Алтай тăрăхĕнчи Белоглазов районĕнче мĕн пурĕ те виçĕ совхоз ĕçленĕ. "Папанинский" ятлине лекнĕ Алексей Бойков. Бригадăра 6 арçын, ыттисем – хĕрсем. Вĕсен хушшинче пĕр институтра тĕрлĕ факультетра вĕренекенсем те, урăх халăх çыннисем те. Чарыш юхан шывĕ çумĕнчи Озерки ялĕнче хваттерленнĕ каччăсем. Вырнаçса пĕтсенех шыва кĕме чупнă. Урасене чĕр куççи таран кăна йĕпетме пултарнă – Алтай тăвĕсенчен юхса тухакан, шăнтса яракан шыва хăнăхманран ӳт-пӳ чĕтреме пуçланă. Сип-сивĕ те тăп-тăрă шывра чулсем, пулăсем куç кĕски çинчи пекех курăннă.

Мĕне кăна вĕрентмен пулĕ инçетри пурнăç? Алексей ку таранччен ыттисен çӳçне шакла хыркаланă-ха, анчах пĕр бригадăна лекнĕ Тăвай районĕнчи Володя Прокопьева епле çӳççĕр хăварăн? Хачăпа тата арçын турипе юлташĕн çӳç-пуçне чиперех йĕркене кĕртнĕ.



Алексей Бойков

С. Журавлев сăн ӳкерчĕкĕ

### Икĕ алла – вун икĕ ĕç

Ĕçлесси йĕтемрен пуçланнă. Ăна тасатнă, кайран тырă хумалли пысăк ӳпле тунă. Ĕçе вĕçлесен унăн çӳллĕшне виçме ӳркенмен Алексей – 12 метр. Тăвай ачипе Володьăпа тăрă тăвакан ăстасем пулса тăнă. Ĕç хакĕпе те интересленмен маттурсем. Ӳпле тунă çĕрте аялта тăракансене пĕр тăваткал метршăн 30 пус, çӳлтисене 1 тенкĕ те 20 пус тӳлеççĕ. Тепри, тен, шарламастчĕ те, анчах Володя пĕтĕм укçана пурне те пĕр пек пайлама ыйтнă, хака уйăрттарман.

"Ĕç пуçличчен хакне ыйтăр, ăна пĕлмесĕр ан пуçăнăр. Забастовка тăвăр", – текенсем те тупăннă. Анчах инçетрен килнĕ çамрăксем вĕсен хыççăн кайман, мĕн хушнă, çавна тунă. Алексей Бойков пек ĕçшĕн çунса тăракансем çĕннине вĕреннĕ. Чул хула облаçĕнчи Юра Тюровпа комбайн хыçĕнчи урапа çине улăм пуçтарса пыма тăратнă ăна. Вăл вăхăтра комбайна трактор туртнă, хыçра урапа тата подборщик пынă. Ялта ӳснĕ, каникулта колхозра ĕçленĕ чăваш каччишĕн ку ĕç йывăр пулман. Пĕччен те ĕлкĕрсе пырасса туйнă та юлташне канма янă. Иккĕшĕ пĕрер кунран ылмашăнса ĕçленĕ.

Комбайн штурвалне куç хывнă каччă. Пĕррехинче комбайнер хăйĕн вырăнне Алексее хăварнă. Штурвал умне пуçласа ларнăскер çухалса кайман.

Пĕр çаврăм туса пĕр гектар çинчи тырра вырнă. Кунне 14-17 гектара "парăнтарнă". Кашни кун малтисен йышне лексе каччăсем вымпела тивĕçнĕ. Паха парне те – "Победа" автомашина – вĕсене лекмеллеччĕ... 7 гектар çинче вырмалли тырă юлнă, вара – çĕнтерӳçĕсем. Кунсерен илекен тухăç (гектартан 30 центнертан кая мар) та тивĕçтернĕ. Анчах 7 гектар çинче вырнă тырра йĕтеме илсе кайма машина темĕн пек кĕтсен те çитмен.

Ставрополь йĕкĕчĕ чăваш каччине чылай вăрттăнлăха вĕрентнĕ. Лешĕ хăйсен патĕнчи МТСра аслă механик чухне утă çулассипе рекорд тунă, пĕтĕм Раççейри ял хуçалăх куравне кайма тивĕçнĕ. Унăн аллине лекнĕ техника чăхăмламасăр ĕçленĕ. Алексей унран механизмсене çу сĕрме вĕреннĕ. Пĕрне – 2, теприне – 4, виççĕмĕшне 6 сехетрен сĕрсе тăнă. Тутăх пĕтиччен, çĕнĕ çу тухиччен. Техника вансан тĕп сăлтавне тупса тăрăшсах юсанă. Тырра элеватора ăсатмалла чухне куç тĕлне ваннă погрузчик лексенех "сиплеме" тытăннă. Кашни çĕнĕ ĕçе кăмăлпа пурнăçланăран ăна çăмăллăнах парăнтарнă. Ĕнерхи студентшăн мĕн чухлĕ кăсăклăх, çĕнĕлĕх!

### Киле – медальпе

"Кахалраххисем пач пулман-и вара çерем çĕрсене уçма кайнисен хушшинче?" – пĕлес килет манăн. "Пирĕн ушкăнра пĕр еврейка пурччĕ, – хуравлать Алексей Осипович. – Ял хуçалăхĕнче ĕçлесе курманскер пулнă ĕнтĕ. Чăваш пединститутĕнчен пĕрле килнĕ Мататова хушаматлă таджик хĕрĕ те çав ĕç тĕлне пĕлмен". Çавах каялла киле кайнисене ас тумасть ветеран. Наянраххисене "яратпăр" тесе хăратнă, чăннипе çапла туман, хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнисем те пулман.

Нумайăшĕ хăйне ĕçре кăтартма тăрăшнă. Акă Володя Прокопьев, Яков Остеров, Петр Андрейцев машина çине пĕр кунра савукпа (алă вĕççĕн) 40 машина тырă тиенĕ. Маттурсем çинчен Алексей Бойков район хаçатне çырса пĕлтернĕ.

Вăхăт çитсен киле пуçтарăннă май ĕçлекенсене укçасăр пуçне тырă панă. Тăван республикăна çитсен тырра тĕрлĕ чукун çул станцийĕнче илнĕ. Алексей Бойков ашшĕ унти чĕр тавара вырăнти колхоз ячĕпе тӳрех патшалăха панă, кайран тырра ял хуçалăх предприятийĕ тавăрса панă.

Алтайра пĕр уйăх ытла ĕçлесе студент "Çерем çĕрсене уçнăшăн" медальпе, парнесемпе киле таврăннă.

### Çемçе тӳшекпе кĕтмен

1960 çулта Казахстанри çерем çĕрсене уçма чăваш ачисене Алексей Бойков хăй ертсе кайнă. Отряда студентсем те, ĕçлекен çамрăксем те лекнĕ. Çаксене тахăшĕ инçетре апат-çимĕçпе, çемçе тӳшек сарса кĕтсе илессе шантарнă. Çавăнпах Павлодар хулине çитиччен хăшĕ-пĕри илнĕ апата пăрахнă. Алексей Осипович асăрхаттарсан та хăлхана чикмен. Тӳрре тухнă унăн сăмахĕ: ниçта та апат-çимĕçпе кĕтмен. Пĕринче выçăскерсене апатлантарма ӳкĕтлесех лавккапа столовăя уçтарма тивнĕ.

Çамрăксен пĕр ушкăнĕ совхоза маларах ларса кайнă. Анчах вĕсем вырăна вăхăтра çитеймен. Шырама лекнĕ. Пилĕк çухрăмран çул çинче хĕр выртнине асăрханă, темиçе çухрăмран – тепĕр çамрăка. Выçăскерсем вăй пĕтнипе малалла утайман.

Вырăна çитсен нимĕнле тӳшек те курман, апачĕ те пулман. Шăшисем чупса çӳренĕ вăрлăх складне тасатнă та утă хунă, ун çине брезент сарса çывăрма выртнă.

Куйбышев районĕнчи "Коминтерн" совхозра, кайран ытти хуçалăхра хăй те ĕçленĕ, çамрăксене те ĕçлеттернĕ паянхи ветеран. Нимĕнле пулăшуран та пăрăнман.

Мыскарасем те курнă. Ларион Козин çамрăк çыравçă акă каярах юлса пынă, ĕç ыйтнă. Алексей Осипович ăна кӳршĕ хуçалăх бригадине В. Никитин (Станьял) патне янă. Лешĕ студента мунча хутма хушнă. Апатланнă хыççăн ĕçлекенсем мунча çинчен ĕмĕтленнĕ, анчах шаннă кайăк йăвара пулман. Мунчана вĕри тăвас тесе каччă нумай хутнă. Тăм çапса тунă хуралтă çакна чăтайман, çунса кайнă. Мунчасăрах юлнă вара.

Пĕр çĕрте ĕçленипе çырлахман чăваш çамрăкĕсем. Кăнтăрла тырă пуссинче тар тăкнă хыççăн ял хуçалăх институчĕн студенчĕсем хăйсен ирĕкĕпе кукурус уйне тухнă.

Алексей Бойков маттурсемпе мухтаннă, теприсене, кирлĕ чухне, ăс пама тивнĕ. Паха опыт илни малашнехи пурнăçра çынсемпе ĕçлеме пулăшнă. "Пур халăх та ĕçчен, пуринпе те пĕр чĕлхе тупма пулать", – тет вăл иртнине аса илсе.

**Ирина НИКИТИНА.**



Çула тухнă студентсен ушкăнĕ



Çемье архивĕнчен

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 966 Тираж 4403

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем явапла.